Ыран – Вăрман ĕçченĕсен кунĕ

# Вăрман – пирĕн пуянлăх

***Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Вăрман ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ. Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа кĕтсе илеççĕ-ха ăна “Моргаушсельлесхозра” тата Малиновка лесничествинче вăй хуракансем уява, йывăç хунавĕсем лартассипе еплерех ĕçлесе пыраççĕ. Çак тата ытти ыйтусем çине хуравлама ыйтрăм эпĕ «Моргаушсельлесхоз» ертӳçинчен Владислав Витальевич ВАСИЛЬЕВРАН тата Малиновка лесничествин ертӳçинчен Анатолий Петрович ЯКОВЛЕВРАН.***

**– Владислав Витальевич, калаçăва сирĕнтен пуçлар. Хăвăр хуçалăхпа кĕскен паллаштарсамăр?**

– Пирĕн хуçалăх 1998 çулта йĕркеленнĕ, унăн пĕрремĕш ертӳçи А.М. Титов, ун хыççăн Б.В. Хрусталев пулнă, çак çултан эпĕ ертсе пыратăп. Малтанхи çулсенче Муркаш районĕнчи вăрман лаптăкĕсемпе кăна ĕçлеттĕмĕрччĕ. Пурнăç улшăнăвĕ пире те аякка хăвармарĕ, халĕ пирĕн хуçалăх Муркашпа Етĕрне районĕсене пĕрлештерет. Штатра тăракансен йышĕ 9 çынпа танлашать.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, эпир районти ял хуçалăх предприятийĕсен территорийĕсенче вырнаçнă вăрмансемпе ĕçлетпĕр. Вăрман фончĕсене хуçалăхсене 49 çуллăха арендăна панă. Çавăнпа та çак вăрман лаптăкĕсене пăхса асăрхсаса тăракансем хуçалăхсем çинче шутланса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн икĕ районта 46-ăн, вăрман фончĕ 6400 гектар хуçалăхăн.

**– Эсир вăрмансене çĕнетесси çине мĕнле пăхатăр, мĕнле ĕçсем пурнăçлатăр?**

– Пирĕн кун-çул вăрман ырлăхĕпе тачă çыхăннă. Çавăнпа та йывăç хунавĕсем лартасси çине пурин те пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ваттисем каланă каларăша: “Пĕр йывăç кас та, виçĕ сапан ларт” тенине пурин те асра тытмалла. Енчен те эпир паян йывăçсем лартасси çине сӳрĕккĕн пăхатпăр пулсан, пирĕн ачасем çĕмĕртсĕр Çĕмĕрткассинче, юмансăр Юманайĕнче, хурăнсăр Хурăнкассинче пурăнма пуçлĕç.

Вăрмансене çĕнетес, вĕсенче агромелиораци ĕçĕсене пурнăçлас, вĕсемпе вырăнлă, тĕллевлĕ усă курас, хӳтĕлес тĕлĕшпе мероприятисем туса ирттеретпĕр. Ытларах эпир йывăç хунавĕсем лартас ĕçе шкул ачисене явăçтаратпăр.

Кĕçех кĕркуннехи йывăç лартас тапхăр пуçланать. Çак ĕçе пурнăçлама 3,8 гектар палăртса хутăмăр. Ытларах эпир хурăнпа чăрăш хунавĕсем лартатпăр, вăхăтлăх питомникрен кӳрсе килетпĕр. Эпир хамăр хуçалăха йĕркеленĕ кунран пуçласа 240 гектар йывăç лартрăмăр.

Курăс, мунча милĕкĕ, утă хатĕрлемелли, пыл туса илмелли, эмел курăкĕсем пуçтармалли лаптăкĕсем те пĕчĕкленнĕн туйăнать. Юлашки вăхăтра вăрман ырлăхĕпе усă курассине чакни палăрать. Е авалтан хакланă пуянлăх хăй хакне çухатса пырать-ши?

**– Вăрмансене санитари тĕлĕшĕнчен тасатса тирпейлесси мĕнле пурнăçланать, ял халăхĕ хутшăнать-и çак ĕçе?**

– Уйрăм хуçалăхсем вăрмансене санитари ĕçĕсене туса ирттересси çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Малтанхи çулсенче вара вăрманти хăрăк вутă-шанкă пуçтарса тасатсах тăратчĕç, ун чухне ăна хаклама та пĕлетчĕç. Халĕ ял халăхĕ ку ĕç çине алă сулни сисĕнет. Тен, эпир чунсăрланса пыратпăр? Вăрмана канма пыракансене асăрхатăн та санитари çинчен пачах манаççĕ, хăйсем хыççăн çӳп-çап хăварма та именмеççĕ.

**– Халĕ халăх “кăвак çулăм” ырлăхне хăнăхрĕ те, вăрмана вутă ыйтма пыракансен йышĕ те чакрĕ пулĕ?**

– Чăнах та ялсене çут çанталăк газĕ кĕртни вăрман ĕçченĕсем çине те витĕм кӳчĕ. Вутă илес текенсен йышĕ палăрмаллах чакрĕ. Апла пулсан та вăрманти йывăçа вутă валли те, материал валли те кастаратпăр. Паянхи кун 9900 кубла метр касмалла. Етĕрне тăрăхĕнче пĕтĕмпе (сплошная рубка) касмалли 1400 кубометр. “Хлебороб”, “Ударник”, “Оринино” тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсен территорийĕсенчи вăрмансенче тĕпрен касмалли лаптăкĕсене палăртнă. Кăмăл тăвакансен пирĕн пата килсе калаçмалла.

**– Вăрман хуçалăх ĕçченĕсене професси ячĕпе мĕн суннă пулăттăр?**

– Паянхи пурнăç пуриншĕн те кăткăс, тĕрлĕрен йывăрлăхсем кăларса тăратать. Патшалăх енчен пулăшу çук тесен те юрать. Çавăнпа та пирĕн кашнин тăрăшмалла.

Уяв çитнĕ май вăрман хуçалăх ĕçченĕсен пархатарлă ĕçне палăртса хăваратпăр. Чи малтанах Муркаш тăрăхĕнче Николай Геннадьевича ырăпа асăнас килет. Çавăн пекех Етĕрне тăрăхĕнчи чылай çул аслă мастерта тăрăшакан Николай Владимирович Гаврилова палăртмалла. Вĕсем ĕçре тăрăшулăхпа палăраççĕ, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Вăрман хуçалăхĕсен ĕçченĕсене уяв ячĕпе саламласа ырлă-сывлăх, телей, пур енлĕн ăнăçусем сунас килет.

Çакна манас марччĕ: вăрман вăл çыншăн яланах канăç та, çăлăнăç та, хӳтлĕх те пулнă, малашне те çаплах пултăрччĕ.

**– Анатолий Петрович, халĕ сире сăмах. Сирĕн хуçалăх пирки те пĕлес килет.**

– Эпĕ Малиновка лесничествин ертӳçинче ĕçлеме пуçланăранпа вунпĕр çул çитрĕ. Пирĕн коллективра çирĕм икĕ çын вăй хурать, вĕсем пурте вăрман ĕçне чунĕпе панăннă çынсем. Хуçалăхăн пĕтĕмĕшле вăрман лаптăкĕ 3922 гектар, вăл виçĕ район территорине пайланă. Етĕрне районĕн çĕрĕ çинче 400 гектар, Элĕкре 450 гектар, ытти Муркаш тăрăхĕнче сарăлать.

**– “Йывăç ларт та ăна упра” программăпа мĕнле ĕлесе пыратăр?**

– Кашни çыннăн хăй ĕмĕрĕнче йывăç лартса ӳстермелле. Эпир те ку тĕлĕшпе япăх мар ĕçлесе пыратпăр, ыттисене те явăçтаратпăр. Çуркуннехи тапхăрта 15 гектара яхăн йывăç хунавĕсем лартса хăвартăмăр. Юлашки çулсенче ку ĕçе пурнăçлама Çатракасси шкулĕнче вĕренекен ачасем питĕ пулăшаççĕ. Самантпа усă курса унăн ертӳçине пысăк тав сăмахĕ калас килет. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче пурăнакансем ку тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ.

Лартмалли материала эпир Ивановка питомникĕнчен кӳрсе килетпĕр. Йывăç вăррисене те хамăрах пухса хатĕрлетпĕр. Вăрманти ĕççене туса пыма патшалăх 15-20 процент кăна уйăрса парать, ыттисене хамăрăн ĕçлесе тумалла. Хальхи вăхăтра 8-10 çул каялла лартнă йывăççене шĕшкĕ пусса илнĕ. Çавăнпа та çаксене васкасах тасатмалла. Анчах пирĕн укçатенкĕ çук. Çакна республика шайĕнчех татса памалла. Вăрман ытти отрасль пек паян ĕçлесе паян тупăш памасть, ăна иличчен чылай вăхăт кирлĕ. Тĕслĕхрен, 2-3 метр тăршшĕ йывăçсем 10 çул каялла лартнисем. Халĕ эпир çитес çуркунне валли вунă гектар çĕре сухаласа хăвартăмăр.

Йывăç лартатпăр-ха, ĕçĕ унпа пĕтмест. Чылайăшĕ курăк айне пулса юлаççĕ, кунта вара вĕсен ӳсесси те чакать. Çавăнпа та малтанах çамрăк йывăçсене пăхса çитĕнтерес ĕç çине кирлĕ пек тимлĕх уйăрмалла. Кунта тепĕр хăрушлăх та пур. Çуркунне кивĕ курăка чĕртсе яраççĕ те çулăм вара типĕскерне талккишпех çунтарса ярать. Кун пек тĕслĕхсем Юнкăпа Шетмĕпуç тăрăхĕсенчи вăрмансенче тĕл пулчĕç. Çавăнпа та тирпейлĕх çине алă сулмалла мар.

Тепĕр инкек вăл - çамрăк йывăçсем лартнă лаптăксене вылььăхсене кĕртсе таптаттарни. Çакăн пек тĕслĕхсене лайăх пĕлсе тăрса çынсем курмăш пулаççĕ. Пĕри чунтан йывăç лартать, тепри куç хупать. Хамăр ĕçе шута хума вĕренсе çитеймен-ха эпир.

**– Паллă ĕнтĕ, чылайăшĕ çут çанталăк газĕпе усă курать, çавăнпах та вутă-шанкă илекенсен йышĕ чакни сисĕнет. Çакă вăл сирĕн тупăш çăлкуçĕ шутланать вĕт-ха?**

– Çапла, ку енĕпе йывăрлăх пур. Малтанхи çулсенче вутă илекенсем нумайăнччĕ. Халĕ вутă хакне чакартăмăр пулин те, сахалрах илеççĕ. Паянхи кун пирĕн патра юман вуттин 1 кубла метрĕ – 250 тенкĕ, ăвăс – 150 тенкĕ, материал хакĕ: юман – 800-1200 тенкĕ, ăвăс – 400-500 тенкĕ. Çавăн пекех паянхи кун Лантăшпа Юнкă вăрманĕсенче вутăлăх касмалли хăрăк йывăç чылай. Кăмăл тăвакансене пирĕн пата килме ыйтатпăр.

**– Вăрманпа саккуна пăсса усă куракансемпе мĕнле ĕçлетĕр?**

– Вăрман саккунне сĕмсĕррĕн пăсса йывăççене хăйсем пĕлнĕ пек касакансем те пур-ха. Ун пек тĕслĕх Хорнуй ял тăрăхĕнче пулнăччĕ. Паллах, эпир вĕсене тытсан пуçранах шăлмастпăр. Ан манăр, вăрман вăл харпăр хăй хуçалăхĕ мар. 1 кубла метр юман каснăшăн штраф виçи 54 пин тенкĕ ларать.

**– Паянхи кун сире вăрман тирпейлĕхĕ тивĕçтерет-и?**

– Эпир вăрмана кулленех тухса тĕрĕслетпĕр, кунта вара чуна ыраттараканни куçкĕретех. Ялсенче çӳп-çапа пуçтараççĕ те вăрмана тиесе килеççĕ. Çак тӳнтерле ӳкерчĕк чунсăрлăха кăтартать. Е тата тепĕр самант. Пирĕнтен кашниех вăрман сулхăнĕнче канма кăмăллать. Вĕсем хыççăн пăхатăн та мĕн кăна юлмасть.

**– Юлашкинчен вăрманçăсене мĕн суннă пулăттăр? Камсене ырăпа асăнă пулăттăр?**

– Хамăр хуçалăх ячĕпе пур вăрманçăсене те чунтан саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Пирĕн хуçалăхри вăрманçăсем Александр Никитич Волков, Матрена Порфирьевна Алексеева, Юрий Леонидович Иванов, Михаил Автономович Иванов уяв ячĕпе сăнавлă вăрман хуçалăх грамотисене тата парнесене тивĕçрĕç.

**– Сире уйăрса хăварчĕç-и?**

– Нумаях пулмасть Чăваш Республикин вăрманçăсен сьездне делегат пулса кайрăм, калаçу кунта чăваш юманне сыхлассi пирки пулчĕ. Çакăнта мана Патшалăх Канашĕн грамотипе хисеп турĕç.

Вăрман вăл паян кăна мар, ыран та кирлĕ, çавăншăн пурте пĕрле тăрăшар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

## Тав тăватпăр

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă упăшкана, аттене, асаттене – Муркаш ялĕнче пурăннă Михаил Алексеевич Миронова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн Муркаш район администрацине, республикăра патшалăх ветеринари службине, республикăри ветеринари лабораторине, «Зооветснаб» патшалăх унитарлă предприятине, «Ударник» хуçалăха, районти ветстанци тата ветеринари участокĕсен коллективĕсене, тăвансемпе кӳршĕсене чĕререн тав тăватпăр.

**Мироновсен çемйи.**

Пирĕн юратнă ывăла, мăшăра, аттене, асаттене, пиччене, хуньстарике, хăтана - Муркашра пурăннă, ĕç ĕмĕрне шалти ĕçсен пайĕнче ирттернĕ Владимир Леонидович Сазонова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайне, «Муркашавтотехсервис» усă акционер обществин ĕçченĕсене, районти Культура çурчĕ çумĕнчи «Муркаш» фольклор ансамбльне, юлташсене, тăвансене, Шомик ял çыннисене чĕререн тав тăватпăр. Эсир çын хуйхине ăнланнăшăн, йывăр вăхăтра алă тăсса панăшăн сире çĕр çулччен тасасывă пурăнма сĕнетпĕр.

**Амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, мăнукĕ, шăллĕсем, йăмăкĕсем, тăхлачи.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды сроком до 49 лет, для крестьянского фермерского хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права капитального строительства на нем, расположенного на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, кабинет 313, с 8-00 до 17-00. Телефон для справок 2-12-66.

| № п-п | Месторасположение земельного участка | Кадастровый номер участка | Целевое назначение | Площадь кв. м. |
|---|---|---|---|---|
| 1. | Участок находится примерно в 200 метрах по направлению на юг от ориентира водонапорная башня, расположенная за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Москакасинское сельское поселение, д. Москакасы. | 21:17:090604:0091 | Для производства сельскохозяйственной продукции | 39513 |




**Ĕлĕкхи укçа, кĕнекесем, открыткăсем, статуэткăсем тата кивĕ япаласем туянатăп.**
**Тел.: 8-927-854-29-97.**
**4-5.**

**ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:**



**- упитанных быков, телок, свиней, коров в живом виде;**
**- свинину.**



**Телефон для справок: 60-662, 8-9603051597 звонить в любое время суток. Герман. 3-3.**

**МУП ЖКХ «Моргаушское» требуются водители, сантехники, газоэлектросварщики, электрики.**
**Обращаться по телефону: 2-13-74.**

**Организации (мебельное производство) срочно требуются рабочие с опытом работы, можно без опыта работы на постоянную работу. Оплата труда высокая, бесплатный проезд.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, 14. Тел.: 8-906-389-10-83.**

**Хура-шурă тĕслĕ, пĕрре пăрулană, иккĕмĕшне январь уйăхĕнче пăруламалли ĕне сутатăп.**
**Адрес: Тури Панкли ялĕ, Нина Сергеева. Тел.: 8-903-063-61-05. Кирек хăш вăхăтра та шăнкăравлама юрать.**

**22 сентября в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**Сентябрĕн 8-мĕшĕнче «Рассвет» хуçалăхăн хура-шурă тĕслĕ ĕни çухалнă. Куракансене е пĕлекенсене «Рассвет» агрофирмăна 2-19-91, 52-3-35 телефонсемпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр, парне паратпăр.**

Муркашри «Путене» ача сачĕн коллективĕ музыка ертӳçи пулса ĕçлекен Г.А. Малясован мăшăрĕ

**Вячеслав Геннадьевич**
**МАЛЯСОВ**

нумай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паркан вăтам шкул коллективĕ Л.В. Васильева учительницан

**АШШĔ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3334.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 05.09.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.А.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.